90
.86 чув.
Обязат. экз.



Анисим Асламас

# Мир — пурнăçа

Р

ЛИСТОК СРОКА ВОЗВРАТА

КНИГА ДОЛЖНА БЫТЬ
ВОЗВРАЩЕНА НЕ ПОЗЖЕ
УКАЗАННОГО ЗДЕСЬ СРОКА

Колич. пред. выдач

78
А90



Анисим Асламас

Проверено 10 ФЕВ 2015

# МИР–ПУРНĂÇА

ЧĂВАШ АССР
КĔНЕКЕ ИЗДАТЕЛЬСТВИ
ШУПАШКАР — 1965

ЭК

## ҪЕНЕҪЕРЕ ПУРРИ

Миршӗн кӗрешекенсен юрри . . . . . 5
Савӑнӑҫ юрри . . . . . . . . 6
Хурҫӑ кӗпер . . . . . . . . . 7
Пар ална, Украинӑ пики . . . . . 8
Атӑл хумӗсем . . . . . . . . 11
Сӗрме купӑс . . . . . . . . 13
Ҫолхоз ирӗ . . . . . . . . . 14

## ХӖРАРАМСЕН КВАРТЕЧӖСЕМ

Етӗрне сачӗсем . . . . . . . . 16
Анлӑ Атӑл хӗрринче . . . . . . 17
Шурӑ-шурӑ Шупашкар . . . . . 18
Вӗҫ, вӗҫ, ҫӗршыв ачи! . . . . . . 19

## «ШУРШАЛ ТАХЛАЧИ» МУЗҪОМЕДИРИ ЮРӐСЕМ

Туслӑх юрри . . . . . . . . . 21
Ой, ҫуках пуль телейҫӗм! . . . . . 22
Кӗтрӗм-кӗтрӗм, эс килмерӗн . . . . 24
Хӗрсен ташши . . . . . . . . 25
Чупрӑм тухрӑм кӳлӗ хӗррине . . . . 26
Эх аван, савни . . . . . . . . 27
Атьӑр-и те выляр-и? . . . . . . 29
Ҫосмосри туссен вальсӗ . . . . . 30

9286-чув
Чувашская республиканская
БИБЛИОТЕКА
им. М. Горького
г. Чебоксары Чувашской АССР

**Асламас**
**Анисим Васильевич**

**ЗА МИРНУЮ ЖИЗНЬ**
**ПЕСНИ**

На чувашском языке

*Одобрены и рекомендованы к изданию Союзом композиторов Чувашской АССР*

Редактор **А. Н. Андреев**
Технический редактор **Г. П. Петров**
Художественный редактор **Э. М. Юрьев**
Ҫорректор **И. Р. Остроумов**

НТ 01662. Сдано в набор 4-I 1965 г. Подписано к печати 31-V-1965 г. Формат 84×108 1/16. Изд. № 79/65. Физич. печ. л. 2,0. Усл. печ. л. 3,36. Учетно-изд. л. 3,30. Тираж 1500 экз. Заказ № 23. Цена 17 коп.

Чувашкнигоиздат, Чебоксары, К. Маркса, 36.

Типография № 1 Управления по печати при Совете Министров Чувашской АССР
Чебоксары, Володарского, 5.



А. В. АСЛАМАС

Вăрçă хыççăнхи çулсенче чăваш композиторĕсен çемйи чылай йышланчĕ. Малтанхи тапхăрта республикăри ĕç çыннисене В. Ходяшев, А. Токарев, Т. Фандеев хăйсен пултарулăхĕпе паллаштарчĕç. Каярахпа вĕсен йышне Ф. Васильев, А. Асламас, А. Петров, М. Алексеев хутшăнчĕç. Чăваш музыкинче вĕсен сасси çулсерен вăйланса пырать.

Анисим Васильевич Асламас — чăвашсен талантлă музыкантсенчен пĕри. Вăл Етĕрне районĕнчи Вăрманкас-Асламас ялĕнче 1924 çулти июлĕн 26-мĕшĕнче çуралнă. Унăн пиччĕшĕсем хут купăс калама ăста пулнă. Вĕсенчен пĕчĕккĕ Анисим та вĕреннĕ: ултă çултах вăл хут купăс каланă.

Ялти шкулта çичĕ çул вĕренсен, вун виçĕ çулхи Анисим Шупашкарти музыка училищине кайса кĕрет. Унта вăл 2-мĕш курсра вĕреннĕ чухнех юрăсемпе романссем кĕвĕлеме пуçлать. Çапла, Ф. Тютчев поэзийĕпе хавхаланса, çамрăк музыкант «Весенняя гроза» тата «Весенние воды» романссем çырать, С. Алымов сăвви тăрăх «Донцы-молодцы» юрă кĕвĕлет.

1942—1945 çулсенче А. Асламас — Совет Çарĕн салтакĕ. Орел патĕнчи çапăçусем, Белоруссии, Хĕвелтухăç Пруссии, Польшă, Германи — çак çулпа утнă чăваш музыканчĕ, вăрçă хирĕнчи связист-телефонист. Фронтра, пушă самантсенче, красноармеецсен художествă пултарулăхне хастар хутшăннă, полкри салтаксем валли юрăсем çырнă. Вăл тăвата медаль илме тивĕçлĕ пулнă.

Отечественнăй Аслă вăрçă вĕçленсен, А. Асламас Киеври Ленин орденлĕ консерваторие кĕрет. Унта виçĕ çул хушши Украинăри паллă композитор Б. Н. Лятошинский профессор класĕнче вĕренет. Çав çулсенче вăл фортепьянăпа каламалли сонатă, хĕлĕхлĕ инструментсем валли «Квартет», юрăсемпе романссем çырать.

Анчах та фронтри контузи хыççăн çамрăк композиторăн сывлăхĕ начарланса пынă. Çавăнпа та 1948 çулта А. Асламас Шупашкара таврăнать. Кунта вăл малтан музыка училищипе педагогика институтĕнче вĕрентет, каярахпа Çамрăксен театрĕпе Чăваш

академи театрĕнче музыкă пайĕн заведующийĕнче ĕçлет. Композитор çав вăхăтра пысăк формăллă произведенисем чылай кĕвĕлет. Вăл шутра: С. Шавлы сăввисем тăрăх çырнă «Ленин» оратори, фортепьянăпа оркестр пĕрле каламалли концерт, икĕ пайлă симфониеттă, «Çурхи кĕвĕсем» симфониллĕ картинă, И. Тукташ сăвви тăрăх «Тăван çĕршыв çинчен кĕвĕленĕ поэмă», юрăсемпе романссем.

1955—1960 çулсенче А. Асламас Мускаври П. И. Чайковский ячĕпе хисепленекен Ленин орденлĕ консерваторире композици класĕнче вĕренет. Совет музыкин паллă деятелĕсем — В. Г. Фере, Н. П. Раков, С. С. Богатырев профессорсем унăн преподавателĕсем пулнă.

Çав тапхăрта композитор уйрăмах ăнăçлă ĕçлет. Сĕрме купăспа виолончель тата фортепьянă валли çырнă «Вариацисем», хĕлĕхлĕ инструментсемпе каламалли тăватă пайлă «Квартет», фортепьянăпа каламалли «Иккĕмĕш концерт», С. Шавлы сăввисем тăрăх кĕвĕленĕ «Кантатă», фортепьянăпа оркестр пĕрле каламалли «Чăваш рапсодийĕ», «Поэта асăнса» ятлă юрăпа симфониллĕ поэмă (сăввисене К. В. Ивановăн «Нарспи» поэминчен илнĕ), П. Осиповăн «Айдар» драми тăрăх çырнă оперă — çаксем пурте Мускаври консерваторире вĕреннĕ вăхăтра çуралнă произведенисем. Вĕсенче кашнинчех интереслĕ страницăсем, хумхантаракан самантсем, илемлĕ кĕвĕсем нумай.

Композиторăн юлашки вăхăтри сочиненийĕсенчен Чăваш академи музыкăпа драмă театрĕнче лартнă «Вĕçленеймен кĕвĕ» (либретти П. Осиповăн) оперăна тата «Шуршăл тăхлачи» (либретти П. Осиповăн) музыкăллă комедие палăртмалла. Çав произведенисенчи тĕп геройсем — пирĕн вăхăтри совет çыннисем. Халĕ А. Асламас хăйĕн виççĕмĕш оперине çырать, автор унта чăваш совет поэзийĕн никĕсне хывнă Çеçпĕл Мишши поэт сăнарне çутатса парать (либретти Г. Ферепе К. Астровăн).

А. Асламасăн пысăк формăллă произведенисем кăна мар, юрăсем те чылай. Вĕсене хорпа, квартетпа тата пĕччен юрлама кĕвĕленĕ. Юрă жанрĕнчи чи лайăх тĕслĕхсем — «Миршĕн кĕрешекенсен юрри», «Сабăнăç юрри», «Колхоз çамрăкĕсен юрри», «Ас тăватăп», «Етĕрне сачĕсем», «Космосри туссен вальсĕ» тата ытти юрăсем. Çак кĕнекене кĕнĕ çĕнĕ юрăсем те композитор пултарулăхне уççăн палăртаççĕ, чăваш халăхĕ вĕсене хапăлласах йышăнĕ.

**Ю. А. Илюхин,**
музыковед.

# МИРШЁН КĔРЕШЕКЕНСЕН ЮРРИ

Сăвви *С. Шавлын*






Вăрçă пире хăратман, хăратмасть,
Вăйлă эпир вăрçăран.
Вилĕме пурнăç чăтма пултармасть,
Тулĕ шăпу сан, тăшман!

Хушса юрламалли:

Пĕтĕм тĕнче янратать, кăшкăрать:
Мир пурнăça! Мир пурнăça!
Пĕтĕм тĕнче кăшкăрать, ылханать:
Вилĕм вăрçа! Вилĕм вăрçа!
Мир пурнăça!

2. Мул хуçисемшĕн тăван ачине
Амĕш вăрçа парас çук;
Халăх тăхлан сапакан пăшалне
Хăй çинелле йăтас çук.

Хушса юрламалли.

3. Ылтăн хĕвел выляса çĕкленет,
Ылтăн шевле сапалать:
Пирĕн тăван çĕршыв çутă кўрет,
Пĕр тĕрĕс çул кăтартать.
Хушса юрламалли.

## САВĂНĂÇ ЮРРИ

Сăвви *В. И. Давыдов-Анатрин*












1. Чӗвӗл чӗкеҫсем,
Ҫепӗҫ шӑпчӑксем
Савӑнса юрлаҫ янкӑр ирхине.
Хастар каччӑсем,
Ҫамрӑк пикесем
Васкаса утаҫ тулӑ пуссине. } 2 хут

2. Ылтӑн уй-хирсем,
Симӗс вӑрмансем
Тухайса тӑраҫ пирӗн куҫ умне,
Ҫутӑ кӳлӗсем,
Хумлӑ тинӗссем
Чыс-илем кӳреҫ Совет ҫӗршывне. } 2 хут

3. Ырӑ шухӑшсем,
Ҫӗнӗ ӗмӗтсем
Ялкӑшса ҫунаҫ пирӗн чӗрере.
Хаклӑ тантӑшсем,
Ҫывӑх тусӑмсем,
Мухтаса юрлар чаплӑ ӗмӗре! } 2 хут

## ХУРҪӐ КӖПЕР

Сӑвви *С. А. Шавлын*




2. Кӗперне те хывар та, ай, хурҫӑран,
Карлӑкне те тытар та, ай, ылтӑнран.
Илемлӗ анлӑ Атӑл тӑршшӗсем,
Хумханаҫҫӗ сарӑях та хӑмӑшӗсем.
Илемлӗ анлӑ Атӑл тӑршшӗсем,
Каш-кашлаҫҫӗ хура вӑрман тӑрӑхӗсем.

3. Пирӗнех те, ай, кӗпер, хурҫӑ кӗпер,
Асамат кӗперӗ пек, ай, курӑнтӑр.

4. Эпирех те, ай, хывнӑ хурҫӑ кӗпер
Коммунизм кӗперӗ, ай, пултӑр-и!
Илемлӗ анлӑ Атӑл тӑршшӗсем,
Пуҫ таяҫҫӗ пуян колхоз, ай, тыррисем.

## ПАР АЛНА, УКРАИНĂ ПИКИ

*(Туслăх вальсĕ)*

Сăвви *Г. А. Ефимовăн*




-нар Çӗр çин- че кӑ- на мар, тӳ- пе- ре
ы- та- лан- нӑ э- пир ӗ- мӗ- ре.
I.
2. Шап- шу-
чӑн тус- сем- Ки- ев- па Шу- паш- кар. 3. Кил- нӗ
Пар ал- на, У- кра- и- нӑ пи- ки,
Пар ал- на, У- кра- и-


ни_ хă_ çан эп кур_ ман сан пек_ ки,
_нă пи_ ки,
А_ тăл_ та ки_ мĕ_ пе я_ рă_
_нар. Çĕр çин_ че кă_ на мар, тӳ_ пе_ ре
ы_ та_ лан_ нă э_ пир ĕ_ мĕ_ ре,
чăн тус_ сем_ Ки_ ев_ па Шу_ паш_
чăн тус_ сем Ки_ ев_ па Шу_ паш_




1. Кунĕ чӑн та паян сар ҫу пек,
Хурӑнсен ҫивĕтне ҫил турать.
Чĕкеҫсем шыв ҫийне лекнипе,
Ушкӑн-ушкӑн шыв хум кустарать

Хушса юрламалли:

Пар ална, Украинӑ пики,
Нихӑҫан эп курман сан пекки.
Атӑлта кимĕпе ярӑнар.
Ҫĕр ҫинче кӑна мар, тӳпере
Ыталаннӑ эпир ĕмĕре,
Чӑн туссем — Киевпа Шупашкар.

2. Шап-шурах кунта ҫĕмĕрт, палан,
Киевра чечек ҫурнӑ каштан.
Килти евĕр эс пул, ан вӑтан,
Эсĕ — манӑн, эп — санӑн тӑван.

Хушса юрламалли.

3. Килнĕ эпĕр тĕнче ҫĕнетме,
Пирĕнте иксĕлми вӑй-хӑват.
Тыткӑнларӑн эс ман чĕреме,
Юрату пачĕ мӑшӑр ҫунат.

Хушса юрламалли.

## АТӐЛ ХУМĔСЕМ

Сӑвви *Г. А. Ефимовӑн*






1. Чунтан саватăп анлă Атăла,
Ун шывĕпе эп ÿснĕ чÿхенсе,
Çавăнпалах пуль манăн кăмăла
Çĕклентереççĕ Атăл хумĕсем.

2. Шупашкартан инçе-инçе кайсан,
Çап-çут хĕвелĕн шевлипе çиçсе,
Чун-чĕрене вăй-хал парса, ялан
Выляççĕ ирĕк Атăл хумĕсем.

3. Хĕвел анса ларсан, çыр хĕррине
Тухаççĕ капăр тумлă пикесем,
Кунта куратăп хамăн савнине,
Савма хушаççĕ Атăл хумĕсем.

4. Мухтатăп эпĕ Аслă Атăла,
Ун çийĕнче ÿсеççĕ халь ГЭСсем:
Çĕршывăма патвар хăватпала
Çутатĕç тăван Атăл хумĕсем.

## СĔРМЕ КУПĂС

Сăвви *В. Я. Урдашăн*






1. Аякран курăнать шурă шупăр,
Шурă шупăр уртать улмуççи.
Юрласам, калаççам, сĕрме купăс,
Эсĕ ман чун савни, чун уççи. } 2 хут

2. Иртнĕ çул пĕр хĕрпе сăмах хушрăм
Çеçкери улмуççи патĕнче.
Шăрça пек туратти ярăм-ярăм
Чуп тусаччĕ савни питĕнчен. 2 хут

3. Улмуççи ĕрчетме вăл килсеччĕ
Колхоза çывăхри хуларан.
Маншăн вăл çеçкери чечек пекчĕ,
Тен, эп хам уншăн çеç çуннăран. } 2 хут

4. Мĕншĕнех улмуççи чечек сарнă,
Мĕншĕнех çеçкисем хитре-ши?
Тен, ăна хăй сăнне савни панă,
Тен, вăл хăй ун сăнне илнĕ-ши? } 2 хут

5. Аякран курăнать шурă шупăр,
Шурă шупăр уртать улмуççи.
Юрласам, калаççам, сĕрме купăс,
Эсĕ ман чун савни, чун уççи. } 2 хут

## КОЛХОЗ ИРĔ

Сăвви *М. А. Волковăн*






1. Вӑшӑл-вӑшӑл вӗрет ҫил ир кӳлӗм,
Қасма урлӑ палан уртӑнать.
Авӑтать-ҫке куккук илӗртӳллӗн,
Сассипе чӗрене ӑшӑтать.

2. Йӑлӑмран сар хӗвел ӑшшӑн кулчӗ,
Ӗҫлӗ халӑх васкать уй-хире.
Вӗсене пуҫ тайса ырӑ сунчӗ
Укӑлча умӗнчи шур сирень.

3. Ӗшнере шӑпчӑксем вӑрансассӑн
Улӑхра ӗҫ юрри ҫӗкленет.
Сар хӗрсен юррине кассӑн-кассӑн
Уҫӑ ҫил ман пата ҫитерет.

4. Ялтӑрса вӑй вылян ирхи сывлӑм
Ҫӗклентерчӗ сӳнми ӗмӗте.
Эп сана юрататӑп, ҫӗршывӑм
Чи таса юрату хӗмӗпе.

## ЕТӖРНЕ САЧӖСЕМ

*(Хӗрарӑмсен квартечӗ)*

Сӑвви *С. П. Юшковӑн*






1. Шурă-шурă шупăр тăхăнаççĕ
Çуркунне Етĕрне сачĕсем.
Çеçкисем пек хитре курăнаççĕ } 2 хут
Шăварма килекен хĕрĕсем.
2. Кайăксен юррипе янăраççĕ
Çу каçах Етĕрне сачĕсем.
Шăпчăкран кая мар шăранаççĕ } 2 хут
Ĕç çинчи хĕрĕсен сассисем.
3. Улмипе-çырлипе мухтанаççĕ
Кĕр енне Етĕрне сачĕсем.
Пиçекен çырла пек курăнаççĕ } 2 хут
Улмасем пухакан хĕрĕсем.

9286-ув

## АНЛĂ АТĂЛ ХĔРРИНЧЕ

*(Хĕрарăмсен квартечĕ)*

Сăвви *Г. Д. Харлампьевăн*






Чувашская Республиканская
БИБЛИОТЕКА
им. М. Горького
г. Чебоксары Чувашской АССР

1. Сывлăх сунмасăр уйрăлтăн,
Тусăм, ун чух эс манран,
Урăххине эс тĕл пултăн,
Вăл чипер, терĕн, санран. } 2 хут

2. Анчах юрату пулман-мĕн
Чиперрин чун-чĕринче.
Акă халь пĕччен çӳретĕн
Анлă Атăл хĕрринче. 2 хут

3. Эп пĕлеп, эс кулянатăн,
Ман çинчен аса илсе.
Қаçару ыйтма шутлатăн
Анлă Атăл хĕрринче. } 2 хут

4. Эп пĕлетĕп, ĕненетĕп:
Тĕл пулатпăр ирхине.
Сана эпĕ кĕтсе илĕп
Қаллех Атăл хĕрринче. } 2 хут

## ШУРĂ-ШУРĂ ШУПАШҚАР

*(Хĕрарăмсен квартечĕ)*

Сăвви *П. П. Хусанкайăн*




1. Шурă-шурă Шупашкар,
Шутламанччĕ килессе.
А-ах, апла мар,
Кĕтрĕм Атăл-тинĕсе,
Кĕтрĕм Атăл-тинĕсе, тинĕсе.

2. Çӳллĕ, çӳллĕ Шупашкар,
Çĕлĕк ӳкрĕ пуç çинчен.
А-ах, апла мар,
Пуçа тайрăм чĕререн,
Пуçа тайрăм чĕререн, чĕререн.

3. Аслă, аслă Шупашкар,
Асăнмашкăн та хăйман.
А-ах, апла мар,
Асăмран та вăл кайман,
Асăмран та вăл кайман, ай, кайман.

## ВĔÇ, ВĔÇ, ÇĔРШЫВ АЧИ!

*(Хĕрарăмсен квартечĕ)*

Сăвви *Уйăп Мишшин*






1. «Вӗҫ, вӗҫ, куккук!— тесе юрлать чӑваш,—
Хура вӑрман хӗрне, ай, ҫитиччен».
Паян ку юрӑ пирӗншӗн йӑваш,
Юх, юрӑ, космос паттӑрӗ ҫинчен!

2. Вӗҫ, вӗҫ хӑюллӑ, паттӑр Андриян,
Ҫӳлтен ҫӳле те инҫетрен инҫе!
Чун савӑнать! Чӑваш сасси паян
Ян-ян каять тӗнче уҫлӑхӗнче.

3. Тӳпи те ҫук тӗнчен, ҫук ун маччи,
Сӑмах-юмах кӑна пырать ҫапла.
Вӗҫ, вӗҫ, ҫӗршыв ачи, чӑваш каччи!
Сан ҫӑлтӑрсем патне ҫул уҫмалла.

Вӗҫ, вӗҫ, куккук! Вӗҫ, вӗҫ, куккук!

# ТУСЛĂХ ЮРРИ

*(«Шуршăл тăхлачи» музкомедирен)*

Сăвви *В. И. Давыдов-Анатрин*






1. Мирлĕ пурнăç аслă çĕршывра
Куллен-кун хăватлăн çĕкленет.
Уçă, ырă сывлăш таврара,
Кунта тус-тăванлăх вăй илет.

Эх, илемлĕ савнă уй-хирсем,
Сарăлса выртаççĕ çарансем.
Кашласа лараççĕ вăрмансем.
Ĕçпеле мухтавлă çамрăксем!

2. Паттăр пулăр, çамрăк тантăшсем,
Çутă ĕмĕт, ялкăш чĕрере.
Юхчăр савăк хӳхĕм юрăсем,
Пирĕн туслăх пытăр ĕмĕре.

Юхтăр юрă, кайтăр таврана,
Пурнăç ырă пирĕн çĕршывра.
Паттăр-улăп халăх, тав сана,
Çĕклен эсĕ аслă туслăхра!

## ОЙ, ÇУКАХ ПУЛЬ ТЕЛЕЙĔМ

*(«Шуршăл тăхлачи» музкомедирен)*

Сăвви *В. И. Давыдов-Анатрин*






1. Ой, ман чунăм ыратать,
Чĕрем çулăмпа çунать.
Кĕтнĕ ĕмĕт путланчĕ,
Савнă хĕрĕм çухалчĕ. } 2 хут

2. Юри килтĕм эп кунта,
Савнă тусăм, эс ăçта?
Куçăм умне тухсамччĕ,
Ху сассуна парсамччĕ. } 2 хут

3. Çук, тусăмçăм сас памасть,
Пăхса ăшшăн йăпатмасть.
Ах, çунать-çке чĕремçĕм,
Ой, çуках пуль телейĕм. } 2 хут

## КĔТРĔМ-КĔТРĔМ, ЭС КИЛМЕРĔН

*(«Шуршăл тăхлачи» музкомедирен)* Сăвви *В. И. Давыдов-Анатрин*




1. Кĕтрĕм-кĕтрĕм, эс килмерĕн,
Ăçта-ши, чунăмçăм, çўрен?
Е çиллентĕн, е тиркерĕн,
Е йăлт мантăн ман çинчен?
2. Кунĕн-çĕрĕн шухăшлатăп:
Эс тухмастăн асăмран.
Мана мĕншĕн çунтаратăн,
Мана мĕншĕн улталан?
3. Пурнăç çук-мĕн чун савнисĕр,
Йывăр çамрăк чĕрене.
Кĕтĕп эпĕ куç илмесĕр,
Тухчĕ, тусăм, куç умне.

## ХĔРСЕН ТАШШИ

*(«Шуршăл тăхлачи» музкомедирен)*

Сăвви *В. И. Давыдов-Анатриҫ*




1. Сар кайăксем, шăпчăксем,
Илем кӳрĕр тĕнчене,
Юрлăр, ташлăр, тантăшсем те,
Сывлăх пуçра пур чухне.

И-да-ля, ха-ли-ля,
И-да-ля, ха-ли-ля,

Юрлăр, ташлăр, çамрăксем те,
Сывлăх пуçра пур чухне.

2. Сăрлă урай, ай, авăнать,
Эпир ташша тытăнсан,
Çамрăк чунăм, ай, савăнать,
Тусăм, сана тĕл пулсан.

И-да-ля, ха-ли-ля,
И-да-ля, ха-ли-ля,

Çамрăк чунăм, ай, савăнать,
Тусăм, сана тĕл пулсан.

3. Ĕçре кайри пулас мар та
Пуçа çӳле йăтас мар.
Каччă савтăр савнине те,
Хĕр юраттăр каччине.

И-да-ля, ха-ли-ля,
И-да-ля, ха-ли-ля.

Каччă савтăр савнине те,
Хĕр юраттăр каччине.

## ЧУПРĂМ ТУХРĂМ КӲЛĔ ХĔРРИНЕ

*(«Шуршăл тăхлачи» музкомедирен)*

Сăвви *В. И. Давыдов-Анатрин*



1. Чупрăм тухрăм эпĕ кӳлĕ хĕррине,
Çамрăк сăнăм ӳкрĕ шыв çине.
Çулăм хыпрĕ манăн çамрăк чĕрене,
Эп çухатрăм, ай, çухатрăм чунăм савнине.

Тусăм, кунĕн-çĕрĕн саншăн çуннипе
Канăç пĕтрĕ, канăç пĕтрĕ, чунăм хурланать.

2. Садра вăштăр-вăштăр çилĕ вĕрнипе
Шурă çĕмĕрт лăпкăн хумханать.

3. Сарă çутă уйăх çӳллĕ тӳпере,
Куртăм: кĕçĕ пĕлĕт хушшине.
Хамăн савнă тусăм чунăм-чĕрере,
Вăл туять-ши, ах, туять-ши эпĕ çуннине?

## ЭХ, АВАН, САВНИ...

*(«Шуршăл тăхлачи» музкомедирен)*

Сăвви *В. И. Давыдов-Анатрин*





_вел пă_хать, е_ше_ рет ҫа_ран, а_вă_
тать кук-кук: я_нă_ рать вăр_ман Эх, а_ ван сав_ни, са_на ал пар_сан, ик кă_
_вак ку_ҫу ман ҫи_ не пăх_сан. ы_тар_ не чун_тан ю_ра_
_тан пул_сан.
mf
unis.
ten.
p
a tempo
Ped.

1. Тĕл пуласчĕ ман, савниçĕм, сана,
Темшĕн-çке пĕччен пит кичем чуна.
Хĕрĕмçĕм, тухсам хамăр кил умне,
Укăлча патне, сад пахчи çумне.

Кăнтăртан вĕрет ăшă çил хуллен,
Хумханать çаплах пахчари сирень.
Эх, аван, савни, иккĕн тĕл пулсан,
Юрату çинчен ăшшăн калаçсан.

2. Сар хĕвел пăхать, ешерет çаран,
Авăтать куккук, янăрать вăрман.
Эх, аван, савни, сана ал парсан,
Ик кăвак куçу ман çине пăхсан.

Ытарма та çук сенкер çут ире,
Пахчари сирень пуç таять пире.
Эх, аван, савни, телее тупсан,
Пĕр-пĕрне чунтан юратан пулсан.

## АТЬĂР-И ТЕ ВЫЛЯР-И?

*(«Шуршăл тăхлачи» музкомедирен)*

Сăвви *халăхăн*



1. Атьăр-и те, выляр-и те?
Выляр-и те кулар-и?
Вылякана, кулакана
Ķилех кунта тияр-и?

Атьăр-и те, выляр-и те?
Выляр-и те, кулар-и?
Вăйă-кулă пăсакана
Ķаях кунтан тияр-и?

Аяюк! Маяюк!
Выляр-и те кулар-и?
Вăйă-кулă пăсакана
Ķаях кунтан тияр-и?

2. Тапăрах та, сикĕрех те
Сентĕрене тивтĕрех!
Тайнă çĕре тайăлтăр та,
Сикнĕ çĕре сирĕлтĕр!

3. Эпир капла марччĕ-çке те,
Эпир капла марччĕ-çке;
Ушкăнпала пĕрле пулсан,
Ķĕрлеттерекенччĕ-çке!

Аяюк! Маяюк!
Эпир капла марччĕ-çке;
Ушкăнпала пĕрле пулсан,
Ķĕрлеттерекенччĕ-çке.

## ĶОСМОСРИ ТУССЕН ВАЛЬСĔ

Сăвви *Уйăп Мишшин*





–рӳ! Çĕр–шыв. ра ĕç– хĕ– рӳ.
Çĕр–шыв– ра ĕç– хĕ– рӳ, кос– мос–
Малтан пуçлама
Малалла юрлама
ра çĕн– те– рӳ! 2. Ук ра– –рӳ!
Пи–рĕн çул хыв– мал– ла, ком– му–
–ни– зă– мал– ла! Çĕн– тер– се ут– мал–






1. Вĕçрĕ Шуршăл каччи
Çут тĕнче уçлăхне.
Çут тĕнче уçлăхне
Вĕçрĕ Узень каччи.
Тăванланчĕ тӳпе
Атăл ывăлĕпе,
Днепр ывăлĕпе
Тăванланчĕ тӳпе.

Хушса юрламалли:

Космосра çĕнтерӳ!
Çĕршывра ĕç хĕрӳ.
Çĕршывра ĕç хĕрӳ,
Космосра çĕнтерӳ!

2. Украинец, чăваш —
Тӳпере икĕ яш.
Пĕр тăван икĕ яш—
Украинец, чăваш.
Павлопа Андриян
Паттăр пулчĕç паян.
Чи мухтавлă паян
Павлопа Андриян!

Хушса юрламалли.

3. Вĕçрĕ Шуршăл каччи
Çут тĕнче уçлăхне.
Çут тĕнче уçлăхне
Вĕçрĕ Узень каччи.
Тăванланчĕ тӳпе
Атăл ывăлĕпе,
Днепр ывăлĕпе
Тăванланчĕ тӳпе.

Вĕçлемелли:

Пирĕн çул хывмалла
Коммунизмалла!
Çĕнтерсе утмалла
Пирĕн шав малалла!

Цена 17 коп.



ЧĂВАШИЗДАТ
1965